# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

*27 (8594) №* ✻ *Шăматкун, 2018 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 14-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Республикăра**

## Черетлĕ пулăшу килнĕ

ЧР Финанс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, республикăна федераци бюджетĕнчен черетлĕ транш килнĕ. Сăмах 826,4 миллион тенкĕ пирки пырать. Ăна бюджет тăкакĕсене саплаштарма усă кураççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа республикăна 3 305,7 миллион тенкĕ уйăрнă. Кăçал республикăна çак тĕллевпе 9 917,1 миллион тенкĕлĕх пулăшу килмелле.

## "Шанăç телефонĕ" ĕçлет

Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн регионта пĕрлехи "шанăç телефонĕ" ĕçлеме пуçланă. Унăн номерĕ – 8 (8352) 39-99-99.

Ăна республика çыннисемпе МЧС органĕсем тачă çыхăнса ĕçлес тĕллевпе йĕркеленĕ. Вăл çавăн пекех çынсен шухăш-кăмăлне пĕлме те май парать.

"Шанăç телефонĕпе" шăнкăравласа эсир хăвăра хумхантаракан ыйтăва пама пултаратăр. Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе канаш ыйтма та юрать.

## Пурлăха çĕнĕлле регистрацилеççĕ

Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, электронлă услугăсен хисепĕ ӳссех пырать.

Куçман пурлăха регистрацилеме тата кадастр учетне тăратма паян килтен тухмасăрах пулать. Иртнĕ çул управлени 12 пин заявлени электрон мелпе йышăннă. Ку малтанхи çулхинчен 59 процент нумайрах.

Кăçалхи виçĕ уйăхра вара 4 пин электрон заявлени килнине палăртаççĕ.

**Пĕрлехи информаци кунĕ**

## Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Пĕтĕм республикăри пекех, пирĕн районта та çитес кĕçнерникун, апрелĕн 19-мĕшĕнче, Пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Çав кунхи тĕл пулусене кашни ял тăрăхĕнчех йĕркелеме пăхнă.

Информаци ушкăнĕсем ял çыннисемпе, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулнă май нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе тӳрремĕн килĕшӳсем тăвассин, çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленессин, экологи субботникĕсене тата Йывăç кунĕн çурхи тапхăрне хутшăнассин, ял территорийĕсемпе масарсене тата çул хĕррисене тасатса тирпейлессин, Аслă Çĕнтерӳ уявĕн мероприятийĕсене хатĕрленсе ирттерессин ыйтăвĕсене сӳтсе явма палăртнă. Çавăн пекех "Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонне хутшăнасси пирки те калаçу пулĕ.

**Çырăнтару – 2018**

## Çырăнма васкăр

**"Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 434 тенкĕ те 22 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Вĕренӳ**

# «Ачасем юнашар пулни вăй-хăват парать»



**Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Муркашри вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Ирина Панова çак кунсенче хăйĕн ĕçтешĕсем пулăшнипе «Çулталăкри учитель» конкурсăн республика тапхăрне хатĕрленет. Иртнĕ эрнере вăл конкурсăн район тапхăрĕн çĕнтерӳçи пулса тăчĕ.**

**Кăçал иккĕмĕш классене вĕрентекен Ирина Михайловна ку конкурса ултă çул каялла та хутшăннă.**

**– Ун чухне финала тухнă пилĕк учитель йышне кĕме пултарнăччĕ. Çавăнпа та хальхинче те çав шайран анма юраманнине туйсах тăтăм, ĕçтешсен тата ачасен шанчăкне тӳрре кăларма тĕллев лартрăм, – тет вăл.**

**Шкулта 15 çула яхăн ĕçлекен педагог кунсерен ачасемпе ĕçленине телейлĕ самантсем тесе хаклать, вĕсем ĕçлеме те, пурăнма та вăй-хăват панине палăртать.**

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Кун йĕркинче**

# Тăван тавралăха упрасси – кашнин тивĕçĕ

Тăван тавралăха сыхласси, унăн тасалăхĕшĕн тăрăшасси пирĕн пурнăçăн уйрăлми пайĕ пулса тăчĕ. Экологи ыйтăвĕ паян хамăр енри кашни кĕтесрех çиеле тухать. Çавăнпа та халăхăн экологи пĕлĕвне ӳстересси пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ. Çакăнти çитменлĕхсене пĕтерес, çивĕч ыйтусене çиеле кăларас тĕллевпе ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче Экологи пĕлĕвĕн кунĕ пулать.

Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокуратура тăван тавралăха сыхлассипе саккуна пăснă тĕслĕхсем пирки вăхăтра пĕлтерме ыйтать. Хаçат вулакансем кун пек йĕркесĕрлĕхе асăрхасан çак адрессемпе пĕлтерме пултараççĕ:

Раççейри çут çанталăк надзорĕн ЧР управленине (rpn21@rpn.gov.ru),

ЧР Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерствине (minpriroda@cap.ru),

ЧР Роспотребнадзор управленине (sanit@21.rospotrebnadzor.ru),

ЧР Росрыболовство пайне (srvoljterupr 21@ mail. ru).

Асăннă органсем те сирĕн ыйтăва тивĕçтермесен Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокуратурăпа çыхăнăр. Электронлă адрес: chmpp@cap.ru.

**Шупашкарти районсем хушшинчи çут çанталăка сыхлакан прокуратура.**

**РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран**

## Мăнкун ячĕпе – фестиваль

Мăнкун эрнинче çак çутă уяв ячĕпе вĕренӳпе культура учрежденийĕсенче тĕрлĕ мероприяти иртет.
Ĕнер районта пĕрремĕш хут Мăнкун фестивальне йĕркеленĕ. Уяв савăнăçлă та асра юлмалла иртнĕ.
Ачасем Христос чĕрĕлнине халалланă сăвăсем каланă, юрăсем юрланă, çак пĕлтерĕшлĕ пулăма сценкăсенче кăтартнă.
Ачасене Федор атте, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Андрей Миронов, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова, вĕренӳ пайĕн ертӳçи Зоя Дипломатова саламланă.
Уява ашшĕ-амăшĕсем те хутшăннă, вĕсем фестивале çуллен ирттерме сĕннĕ.
Уяв савăнăçĕ пирĕн чĕресенче упрантăр, ырă ĕçсем тума хавхалантартăр.

## Тракторсем юсавлă

Çур акине хатĕрленесси пĕр кунта пурнăçламалли ĕç мар. Çакна ăнланса районти техникăна пăхса тăракан инспекци пуш уйăхĕн вĕçĕнчех пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчи çур акине хутшăнмалли техникăна хире тухма ирĕк парас ĕçе кӳлĕнчĕ.
– Тĕпрен илсен çур акипе ĕçлеместпĕр, анчах хамăр территорири ĕçсене юсавлă техникăпах пурнăçлама тăрăшатпăр. Çавăнпа та техосмотра хатĕрленесси – пирĕншĕн çирĕп саккун, – тĕрĕслеве тăратнă кустăрмаллă 6 трактор ĕçе тухма хатĕррине палăртрĕ "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикин тĕп инженер-механикĕ Андрей Соломин. Фабрикăра техника çине çирĕп пăхнине иртнĕ çулсенче Китайра туса кăларнă погрузчика туянни те çирĕплетет.

## Вĕрентӳ иртрĕ

Иртнĕ кĕçнерникун 11 сехетре районти пĕрлехи дежурнăй диспетчер службине "Никита" автовокзала сирпĕнмелли хатĕр хуни пирки пĕлтерни çитнĕ. Инструкципе килĕшӳллĕн шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем çийĕнчех инкек пулма пултаракан территорие çынсенчен "тасатнă", çак вырăна ункăна илнĕ, пассажирсене автобуссемпе çула илсе тухассине саппас вырăна куçарнă. Пулса тухни пирки район администрацийĕн пуçлăхне Р. Тимофеева, çăлав службисене пĕлтернĕ.
Малтанхи тĕрĕслев сирпĕнмелли хатĕр пуррине палăртнă. Ятарлă ушкăн ăна сиенсĕрлетнĕ.
Оперативлă ĕçлени вокзала сирпĕтесрен те, çынсем йышлă вилесрен те сыхласа хăварнă, преступника та çийĕнчех тупма май панă. Сăтăр тăвас текене районти Культура çуртĕнче арестленĕ вăхăтра пĕр çын аманнă. Ăна "Васкавлă пулăшу" машинипе çийĕнчех больницăна çитернĕ.
Çак сценарипе иртнĕ черетлĕ вĕрентӳ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

## Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене тата хуняçана, ырă кăмăллă кукаçине тата ват кукаçине – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Геннадий Борисович КИРИЛЛОВА** сумлă юбилейпа – 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.



Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, тулăх пурнăç сунатпăр сана. Пурнăç çулĕ вăрăм та такăр пултăр, ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр, килекен кашни кун савăнăçпа тултăр. Мăнукусемпе, кĕçĕн мăнукусемпе киленсе нумай çул пурăнмалла пултăр.

**Чĕререн хисеплесе те юратса: мăшăрĕ, 5 хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, 12 мăнукĕ, 2 кĕçĕн мăнукĕ.**

Пирĕн юратнă аннене, асаннене, кукамая, хунямана – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Зиновия Васильевна СЕРГЕЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе – 90 çул тултарнă ятпа чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Пире, ачусене, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн чĕререн тав сăмахĕ калатпăр. Эсĕ çĕр çинче пурăнни – пирĕншĕн пысăк телей.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 25 мăнукĕ, 68 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсемпе кӳршисем.**

Пирĕн хаклă çыннăмăра – Тури Тăмлай ялĕнче пурăнакан **Альбина Ивановна КУДРЯШОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Эсĕ ялан тараватлă та ăшă кăмăллă, яланах пурне те пулăшма хатĕр. Пирĕншĕн эсĕ яланах – чи лайăх тĕслĕх, ĕçрен хăраман, ырă ĕçсем тума хистекен хаклă тăван. Эпир сана тулли пурнăçпа пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр. Мăшăрăн юратăвĕ, ачасен хисепĕ, мăнуксен хаваслă сасси сана пурнăçра пурăнма вăй-хал парса тăччăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр.

Çак кунсенче Оксана кинĕн те çуралнă кунĕ. Ăна та уйăх пек çутă кун-çул, çурхи хĕвел пек ырă кăмăл, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Пур кăмăлтан юратса та ырă сунса: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕ, икĕ мăнукĕ, йăмăкĕ, хăтипе тăхлачи, мăн аккăшĕ Елизавета,Федоровсен, Яшковсен, Владимировсен, Красильниковсен, Федоровсен çемйисем.**

Хисеплĕ инке, кумашки, тус-юлташ – Мăрсакасси ялĕнче пурăнакан **Мила Викторовна ПОТРЯКОВА** 65 çулхи юбилейне паллă тăвать. Ăна юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Эпир сана çĕр çинчи мĕнпур ыррине сунатпăр, хĕвел пек ăшă кăмăллă пул, сывлăху çирĕп пултăр, нихăçан та ан ватăл. Турă панă мăшăрун, ачусемпе мăнуксен юратăвĕ тата тăванусен хисепĕ малалла пурăнма вăй-хăват парса тăччăр. Пирĕнпе пĕрле савăнса пурăнма Турри сана тата нумайрах çул усратăр.

**Салампа: Матюхинсен, Кораблевсен, Любимовсен, Никитинсен çемйисем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Виталий Петрович МАРКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Сана тулли пурнăçпа тата нумай çул пурăнма чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Кун-çулу вăрăм та анлă, такăр пултăр, çемьере килĕшӳпе тулăх пурнăç хуçаланччăр. Кашни çĕнĕ кун саншăн ырăпа килтĕр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

## Йышăну

# Çын прависем – малти вырăнта

**Ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче районта Чăваш Республикинчи тĕп суд приставĕ Анатолий ИВАНОВ тата çынсен прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй Надежда ПРОКОПЬЕВА (сăн ӳкерчĕксенче) пулчĕç, пĕрлехи йышăну ирттерчĕç.**



Хăнасем район администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен заместителĕпе Лилия Тарасова ертсе пынипе ĕçлĕ çулçӳреве ватă çынсемпе инвалидсен Йӳçкассинчи интернат-çуртĕнчен пуçларĕç. Унта ĕçлекенсемпе тата пурăнакансемпе тĕл пулса ĕç тата пурнăç условийĕсемпе паллашрĕç.

Интернат-çуртра паянхи куна 50 çын пурăнать. Вĕсем хушшинче ватлăхра кунта канăç тупнисем те, 1-мĕш ушкăн инваличĕсем те пур (кун пеккисем çуррине яхăн). Анатолий Юрьевичпа Надежда Викторовна ватă çынсемпе инвалидсем пурăнакан палатăсене кĕрсе тухрĕç, вĕсемпе уçă калаçусем ирттерчĕç.

– Ватăсемпе инвалидсен интернат-çуртĕнче пурăнакансем хăйсен пурнăç условийĕсемпе кăмăллă пулни, вĕсем тĕлĕшпе çын прависене пăсманни, тимлĕх çителĕклĕ пулни палăрчĕ. Палатăсенче тата ытти пӳлĕмре таса та тирпейлĕ, апатлану лайăх пулни маларах каланине çирĕплетет çеç. Пурнăçламалли вак юсав ĕçĕсене кунта ĕçлекенсем çăва тухсан пурнăçлама шантарнине те ĕненес килет, – терĕ Надежда Викторовна граждансене йышăнма пуçлас умĕн.

Тĕл пулăва пынă граждансене вара нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсавсем ирттересси, сахал тупăшлă çемье статусне илме документсем хатĕрлесси кăсăклантарни палăрчĕ.

Чăваш Республикинчи тĕп суд приставĕ Анатолий Иванов малашне çакăн пек тĕл пулусене Чăваш Республикинчи çын прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйпа пĕрле ирттерессине пурнăçа кĕртни пирки палăртса хăварчĕ. "Муркаш районĕнче çын прависем тата саккунлăх манăçа тухманни эсир ыранхи кунпа пурăннине çирĕплетет", – терĕ вăл.

**А. БЕЛОВ.**



## Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав

# Йывăç çурт лартакана патшалăх пулăшать

Хăйĕн ыйтăвĕ çине Каткас ялĕнче пурăнакан Зиновий хурав илме кăмăл турĕ. Зиновий нумаях пулмасть Муркаш район администрацийĕн официаллă сайтĕнче Раççей Федерацийĕн премьер-министрĕ Дмитрий Медведев харпăр хăйĕн пурăнмалли çуртне йывăç материалтан çĕклеме кăмăл тăвакансене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтересси çинчен калакан документа алă пусни пирки информаци вулани çинчен калать. Анчах та вулаканшăн унти информаци çителĕклех мар курăнать. "Кун пирки тĕплĕнрех ăнлантарса пама май çук-ши? Конкретлă мĕнле пулăшу пирки сăмах пырать? Камсене тивĕçтерĕççĕ ку пулăшупа?" – ыйтать вăл.

Вулаканăн ыйтăвĕ тĕрĕсех. Хальхи вăхăтра ялсенче пурăнакансем хушшинче те хăйсен пурăнмалли çурт-йĕрне экологи тĕлĕшпе таса шутланакан йывăç материалтан хăпартма кăмăллисем сахал мар. Çавăнпа та çĕнĕлĕх пирки тулли информаци илме **район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕпе Алексей МАТРОСОВПА** тĕл пулас терĕм. Сăмах май, Алексей Николаевич ку должносре çак кунсенче кăна ĕçе тытăнчĕ. Çавăнпа та ăна яваплă çак ĕçре ăнăçу суннă май малашне район хаçачĕн редакцийĕпе тачă çыхăнса ĕçлеме сĕнтĕм:

– РФ Правительствин 2018 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчи 259-мĕш номерлĕ йышăнăвĕ пирки сăмах пырать. Йышăнура каланă тăрăх, заводра туса хатĕрленĕ пурăнмалли йывăç çурт туянакансене патшалăх 5 процент ставкиллĕ çăмăллатнă кредитпа тивĕçтересси пирки сăмах пырать. 5 процент ставкăна федераци бюджетĕнчен уйăраççĕ. Йывăç материалтан туса хатĕрленĕ пурăнмалли çурт туянакан çын кредита банкран илет ĕнтĕ. Апла пулсан патшалăх 5 процент çăмăллăх шайĕнчи укçа-тенкĕпе федераци кредит организацийĕсене – банксене тивĕçтерет. Çав тĕллевпе патшалăх 2018 çулта 197,7 млрд тенкĕ уйăрма пăхса хуни пирки калани те пур.

Çавăн пирки те ăнлантарнă. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра йывăç материал ытлă-çитлĕ темелле. Пĕтĕм тĕнчери вăрман тăрăхĕсен 25 проценчĕ Раççей территорийĕнче вырнаçнă. Йывăç конструкцисемпе усă курса пурăнмалли çурт-йĕр тăвасси вара пĕтĕм çурт-йĕр строительствинче 12 процента яхăн кăна. Европăра, Канадăра, Финляндире, Америкăра ку хисеп самай пысăк, 40 – 50 процент таран е ытларах та.

Çак йышăну вăл харпăр хăйне валли пурăнмалли хатĕр йывăç çурт туянас текенсене е тăвас шухăшлисене, çавăн пекех хăйсене валли хваттер нумай хваттерлĕ йывăç çуртра туянас кăмăллисене пырса тивет. Кун пеккисене çăмăллатнă ипотекăпа тивĕçтерме пăхнă.

Енчен те йывăç çурт тăвакан е туянакан пĕтĕм суммăн 10 процентне аванс шучĕпе хывать пулсан, банк тивĕçтерекен ипотекăн вăтам ставки 9 – 10 процент шайĕнче пулать. Патшалăх бюджечĕнчен субсидилессин висине 5 процент пăхса хунă.

Уйрăм условисем пирки асăнса хăварни вырăнлă пулĕ. Ипотека кредичĕ 3,5 млн тенкĕрен иртмелле мар. Клиентăн банкра уснă счет çине илнĕ суммăн 10 процентĕнчен кая мар пуçламăш взнос хывмалла пулать. Çурт тăвакан организаци çурта туса çитерсе туянакана памалли вăхăт 4 уйăхран ытла пулмалла мар. Йывăç çурт лартакансене патшалăх пулăшассин программи кăçалхи апрельтен вăя кĕчĕ. Хальлĕхе ăна кăçалхи ноябрь уйăхĕнчехи тапхăр валли пăхса хунă. Каярах тăсма пултарĕç. Апла пулин те хальлĕхе хăйсен йывăç çуртне тăвас шухăшлисен ноябрĕн 30-мĕшĕччен банка заявкăпа пырса килĕшӳ тума ĕлкĕрсен тĕрĕсрех пулать. Çавăн пекех çурт тăвакан организаци, ипотека кредитне илекен, кунсăр пуçне йывăç çурт мĕнле пуласси тĕлĕшпе те условисем пур.

Пур условисем пирки те йывăç çурт тăвакана е туянакана банкра ăнлантарса пама тивĕç. Мĕншĕн тесен кун пек çыннăн чи малтанах банка кайма тивет. Çавăнпа та йывăç çурт тума патшалăх пулăшăвне тивĕçес текенсене банксемпе çыхăнса пăхма сĕннĕ пулăттăм. Çавăн пекех РФ Правительствин йышăнăвне тупса унпа тĕплĕнрех паллашни те ытлашши пулмасть пулĕ. Документ ячĕ – "О предоставлении из федерального бюджета субсидий российским кредитным организациям на возмещение выпадающих доходов по кредитам, выданным российскими кредитными организациями в 2018 году физическим лицам на приобретение деревянных домов заводского изготовления".

**"Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав" телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

## Çул-йĕр строительстви

# Сĕнӳсем пурте вырăнлă

Çынсемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан ыйтусене татса панă чухне хальхи вăхăтра вырăнта пурăнакансемпе тĕл пулса канашласси, вĕсен шухăш-кăмăлне, сĕнĕвĕсене шута илесси йăлара. Çакă тĕрĕслĕхпе çыхăнни иккĕлентермест. Вырăнти ыйтусене вĕсенчен лайăхрах кам пĕлме пултарĕ-ха тата? Тăвакан ĕçсем чи малтанах çынсене пурăнма хăтлăрах та меллĕрех условисем туса парассипе çыхăнмалла вĕт-ха.

Кун пек мероприяти апрелĕн 12-мĕшĕнче район администрацийĕнче иртрĕ. Пĕлтĕр, Шупашкар агломерацине кĕме тивĕçнĕ май, федераци "Пахалăхлă тата хăрушсăр çул-йĕр" программипе пирĕн районта иртнĕ çул район тата республика çулĕсем çинче юсав ĕçĕсем туса ирттерме май килчĕ. Кăçал вара район çулĕсем çинче татах тăватă объектра юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă. Аукционсем ирттерсе çулсене юсакан организацисене те палăртнă ĕнтĕ. Шăпах çак ĕçсене тишкерчĕç те ĕнтĕ ял çыннисемпе район администрацийĕнче тĕл пулнă май.

Федераци программине хутшăнса районта пĕлтĕр çул ирттерме май килнĕ ĕçсемпе тата ку енĕпе кăçал умра тăракан задачăсемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов паллаштарчĕ. Кăçалхи ĕçсем шутĕнче – "Мăн Сĕнтĕр – Мăн Хураçка – Ишмула", "Муркаш – Хорнуй – Платккасси", "Волга" – Шомик" тата "Тойкилтĕ – Кĕртекасси" çулсене юсасси. Планланă 2019 çулта пирĕн районта ĕçсем пурнăçламалли объект шутĕнче вара "Исетеркке – Актай" çул та пур.

Кăçалхи объектсене ĕçсене туса ирттерме чухне мĕн çине тимлĕх ытларах уйăрмалли, мĕнле тусан çынсемшĕн меллĕрех пуласси пирки депутатсен район Пухăвĕн депутачĕ Александр Сидюшкин, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Андрей Мясников, Каткас ял тăрăх администрацийĕн пуçлăхĕ Геннадий Лебедев тата ыттисем сĕнӳ паракансем пулчĕç. Сĕнӳсем çуран çӳрекенсем валли юсакан хăш-пĕр çулсем хĕррипе тротуарсем йĕркелессипе, автобуссем чарăнмалли вырăнсенче павильонсем тăвассипе, шыв пухăнакан вырăнсенче çул айĕпе юхса тухма пăрăхсем хурса хăварассипе т. ыт. те çыхăннă.

Кунсăр пуçне çулсене юсакан организацисен представителĕсемпе тĕл пулса конкретлă объектсенче татса пама вырăнта палăртмалли ĕçсем те пур. Çавăнпа та çывăх вăхăтрах çулсене юсакан подряд организацийĕсен представителĕсемпе пĕрле объектсене пулса курма калаçса татăлчĕç. Çулсене юсассипе ĕçсем тытăнсан вара общественноç тĕрĕслевĕн ĕçне йĕркелемелли пирки те каларĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă аннене, кăмăллă асаннене – Кашмашра пурăнакан **Людмила Тимофеевна ИШАКОВĂНА** 70 çулхи юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Сар хĕвел ăшшипе килесе, пурнăç илемне туйса пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Кашни çĕнĕ кун савăнăçпа пуçлантăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ юратнă çыннисенчен ан татăлтăр. Сана эпир вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр, юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Ăшă салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, юлташĕсем.**

## Пирĕн календарь

# Берлин операцийĕ

Апрелĕн 16-мĕшĕ – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çак кун 1945 çулта Берлина илессишĕн тапăну стратеги операцийĕ пуçланнă. Берлиншăн пынă çапăçу Аслă Отечественнăй вăрçăн кульминацийĕ пулса тăрать.

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас енĕпе тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн район администрацийĕн 2018 çулхи мартăн 26-мĕшĕнчи 226-мĕш тата 2018 çулхи мартăн 30-мĕшĕнчи 249-мĕш йышăнăвĕсемпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Нелли Валериановна ИВАНОВĂНА**, 14-мĕш номерлĕ "Золушка" ача сачĕн заведующине.

– **Наталия Григорьевна РОМАНОВĂНА,** Çатракасси вăтам шкулĕн историпе обществознани учительне;

– **Надежда Константиновна ЧЕРНОВĂНА,** Муркаш вăтам шкулĕн пуçламăш классен учительне.

Редакци почтинчен

# Пурнăçне çара халаллянă

Юрий Иванов Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Кошак ялĕнче (халĕ ăна Çатракасси ялĕ теççĕ) 1934 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче çуралнă. Шкул ÿсĕмне çитсен вырăнти çичĕ çул вĕренмелли шкулта пĕлÿ илнĕ, хыççăн Муркаш шкулĕнче, Чулхулари электромеханика техникумĕнче ăс пухнă. Шел пулин те, пурнăçĕ ытла та йывăр килнĕрен, аякри хулари вĕренĕве вĕçлеме май килмен çав.

Вĕренсе çын пулас ĕмĕтне вара пурпĕр асран кăларман, Владимирти танк училищинче пĕлÿ илсе лейтенант пулса тăнă. Каярах вара çар ĕçне Белоруссинчи танк корпусĕнче тăснă. Ĕçпе вĕренĕве тачă çыхăнтарса пыракан Юрий Иванович Пензăри çар академине çул тытнă. Пысăк ăсталăх пухма ĕлкĕрнĕ май, 1966 çулхине ăна Ярославль облаçĕнчи Рыбинск хулине çар ĕçне пурнăçлама кайма сĕннĕ.

Кирек епле ĕçе те тÿрĕ чунпа пурнăçланă, яланах пуçарулăхпа палăрнă. Коллективра ăнланупа туслăх хуçаланнă, ĕçтешĕсем пирки ăшшăн калаçнă.

Шел пулин те, унăн ачалăхĕ çухатусăр иртмен, ăна тăван амăшĕпе ÿсме май килмен, çак ăшша ачана тепĕр хĕрарăм парнеленĕ. Ун пирки вăл яланах тараватлăн калаçнă. Амăшĕ вара вăрçăччен пурнăçран уйрăлнă.

Ашшĕне, Иван Степанова, 1941 çулта Хĕрлĕ Çара мобилизациленĕ. Кунта вăл хĕрÿ çапăçусене хутшăннă, шăпа ăна тăван тăрăха илсе çитереймен. Каярах кил-йыша вăл фронтра хыпарсăр çухалнине пĕлтернĕ.

Хастар чăваш каччи ашшĕ-амăш ятне яланах çÿлте тытма тăрăшнă. Подполковник шайне ÿссе çитнĕ Юрий Иванович Рыбинск хулинчен тухнă хыççăн çар ĕçне Челябинскра пурнăçлама пуçланă. Пысăк ăсталăх пухнă маттур чăваш ывăлĕ Уралти оборона завочĕсен çар представителĕ те пулнă.

Юрий Ивановичăн тăрăшулăхне тĕрлĕ шайри наградă çирĕплетет: ĕçри тăрăшулăхшăн, çар ретĕнчи хăюлăхшăн. Çавăн пекех Оборона министерствин тата Оборона промышленноçĕн министерствин Хисеп грамотисене тивĕçнĕ. Тав çырăвĕ те йышлă унăн. Çапла вăл хăйĕн пурнăçĕнчи вăтăр ытла çулне çар ĕçне халалларĕ.

Полковник ÿсĕмĕнче вара отставкăна кайрĕ. Ун чухне вăл çар продукцине йышăнас енĕпе тимлекен аслă категориri инженер должноçĕнче те пулнă.

Тăван кĕтес, ял-йыш, тус-тăван пирки яланах тараватлăн аса илетчĕ. Çынра ырă енсене кăна курма тăрăшатчĕ. Юрий Ивановичăн 68 çулта пурнăçран уйрăлчĕ. Юлашки çула ăна чыслăн ăсатрĕç, вăл Челябинск хулинче ĕмĕрлĕх канлĕх тупрĕ.

**В. СТЕПАНОВА,**
**педагогика ĕçĕн ветеранĕ.**
Çатракасси ялĕ.

100 çулхи юбиляр

# Турă панă тивлет

Ăна эпĕ мĕн ачаранпах лайăх пĕлетĕп. Унăн ачисемпе пĕрле ÿснĕ, пĕр çемьери пек, килте пĕччен пулнăран вĕсем патĕнчен тухма пĕлмен. Нихăçан та курман вăл сас хăпартнине, çиллене-тулхăрса çÿренине. Лăпкă, стайлă, тулкăллăччĕ ялан. Каламалли тупăнсан, васкамасăр, сăмаха шухăшласа, савăлла çапса кĕртнĕ пек чунчĕрене кĕрсе вырнаçмалла калатчĕ.

Сăмахăм **Сарчак ялĕнче çуралса ÿснĕ, кунтах ĕмĕр ĕмĕрленĕ, çитес кунсенче çĕр çул тултаракан Пелагея Алексеевна Алексеева (сăн ÿкерчĕкре)** пирки. Пичĕ çинче тарăн йĕрсем палăрççĕ пулин те сăнран ÿкмен-ха. Темĕнле хăйне евĕр илĕртÿ, ăшран тапса тăраканни текенскер пур ун. Е ĕçпе пиçĕхнисен пурин те çапла-и вăл? Тĕл пулсан тăсăлать вара сăмах-юмах, сÿтĕлет пĕр чăрăнми аса илÿ çăмхи.

Пурнăç çулĕ! Ун çинчен пĕр сăмахпа каласа параймăн. Пелагея Алексеевна Алексеевăн кун-çулĕ çинчен уйрăмах. 1918 çулта Сарчак ялĕнче çуралнă. Шетмĕпуç шкулĕнче вĕреннĕ. Колхозра ĕçленĕ, тырпул çитĕнтернĕ, вырнă-пуçтарнă, вылăх-чĕрлĕх пăхнă, Ишлей чукун çулне, Муркашалла автоçул тунă çĕре хутшăннă. Ыттисем пекех. Ыттисем пекех самана уттипе тан калкал пынă. Мала чупса иртсе каймасăр, кая юлмасăр.

...1941 çулхи хура кĕркунне. Хĕвел анăçĕнче хаяр вăрçă алхасать, ирсĕр тăшман Мускав патнелле талпăнать. Арçынсем Тăван çĕршыва хÿтĕлеме тухса кайнă. Вĕсем хаяр тăшмана çапса аркатассишĕн хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçнă. Ялта хĕрарăмсемпе ватăсем, ача-пăча кăна. Вĕсем те çак хаяр вăрçăра хăвăртрах çĕнтерÿ пултăр тесе пĕтĕм вăй-халне парса, çанна тавăрса ĕçленĕ.

Кĕрхи суха вăхăчĕ. Сухаласа хăвараймарăн – çитес çул уйхир ăнса пулнă çимĕçпе савăнтарасси, пÿлме тыр-пулпа тулли пуласси иккĕленÿллĕ. Çур кунĕ шутлă, пурне те ĕлкĕреймĕн. Лашасем çитмеççĕ – фронта илсе кайнă. Техникăпа ĕçлеме пĕлекен çынни çук. Кĕреçе çине çес шаннипе ĕç тухмĕ... Хура çăхан пек явăнать пуçра шухăш: мĕн тумалла?

– Пĕррехинче, ĕçрен таврăннă чухне, – аса илет Пăлаки аппа,– пăхатăп – трактора çамрăк хĕр тытса пырать.. Тата кам-ха! Хам тахçанах паллакан-пĕлекен хĕр-тантăшăм, Ехрем кассинчи Анук, Анна Гордеева лара парать!

Шăпах çавăн чухне çирĕм виçĕ çулхи Сарчак хĕрĕн трактористка пулса ĕçлес кăмăлĕ çуралнă та. Ватă ашшĕ, пĕрремĕш тĕнче вăрçин офицерĕ Алексей Филиппович Филиппов, хăйĕн ытарайми тĕпренчĕкĕн кăмăлĕн çирĕплĕхне пĕлекенскер тата вăхăчĕ мĕн тери вут та çулăм пулнине курса тăраканскер, хĕрĕн шухăшĕпе сăмахсăрах килĕшнĕ. Хĕрне ырланă, ĕç тухасса шаннине пĕлтернĕ, пил панă. Пелагея Ишлейри МТС çумĕнче йĕркеленнĕ трактористсен хатĕрлекен курсра вĕренет те алла права илет. Ĕмĕчĕ тулнăскер, хăпартланса, çунатланса таврăнать хĕр тăван яла. Унтан Шупуç ялĕнчи Роман Румянцевпа икĕ кун пĕрле ĕçлет. Вĕренни çеç сахал вĕт, хурçă ута итлеттерме хăнăхмалла. Анчах Романа, питĕ васкавлăн, хиртенех фронта илсе каяççĕ. Мĕн тăвăн, вăрçă-çке. Пач кĕтмен çĕртен пулнăран, çакă пуçран тукмакпа туртса çапнă пекех туйăнать.

....Акă хĕр трактор çине улăхать. Пĕтĕм хăюлăхне пухса мотора хускатрĕ. Кĕр-р-р! кĕрлесе саланчĕ мотор шавĕ вилнĕ пек шăпăрт тавралла. Пелагея асăрханса тормоза вĕçертрĕ те хурçă ут тапранса та кайрĕ. Чĕри сиксе тухас пек тапать хĕрĕн. Хыçра суха касси тÿп-тÿррĕн тăсăлса выртса пынине курсан, унăн чун-чĕрине савăнăç хĕлхемĕ çавăрса илчĕ. Пĕрремĕш суха касси! Мĕн чухлĕ хĕпĕртÿ! Мăшăр çунат пулнă пулсан-и, хăй те, çĕр ĕçченне ялан çÿлтен çунат çапса саламлакан тăри пек, тÿпене çĕкленĕччĕ.

Майĕпен Пелагея трактористь ĕçне хăнăхса пычĕ. Тепĕр çулне, хĕл каçсан, Мăн Турхан ялĕнчи Василий Егоров ертсе пыракан трактор бригадинче ĕçлерĕ. Тăваттăн – Сергей Васильев, Роман Сергеев, Мария Малеева тата Пелагея Алексеева – пĕр-пĕринпе ăмăртса, тупăшса ĕçлеме тытăнчĕç. Алла-аллăн, пĕрпĕрне пулăшса. Фронтран килекен йывăр хыпарсемшĕн тарăхса та савăнăçлисемшĕн хавхаланса. Вăхăчĕ çапла. Килĕренех кам та пулсан фронтра. Хăшĕсен пĕччен çеç те мар, темиçен те. Пелагейăн та икĕ пиччĕшĕ, Егорпа Василий, кĕреш юман пек патвар кĕлеткеллĕ икĕ каччă, вăрçă хирĕнче, пурнăçпа вилĕм хушшинче. Килте, çинех, Кĕтерин йăмăкĕ вилес пек чирлĕ выртать. "Ирсĕр фашиста çĕнтерессишĕн!" – çак тĕллевпе пуçланать кашни ир ĕç кунĕ. Пелагейăн çеç мар, кашнийĕнех. Трактористсен ăмăртăвĕнче Сарчак хĕрĕ пĕрремĕш вырăна йышăнать. Кусса çÿрекен Хĕрлĕ вымпел унăн аллине куçать. 1943 çулта Пелагея Алексеевăна ĕçре маттур пулнăшăн "За доблестный труд" медаль парса чысларçĕ. Çак çулах вăл республикăри тыр-пул ăстисен слетне хутшăнать.

– Чăн та, ун чухне ĕçлеме питĕ йывăрччĕ, – халĕ те, çитмĕл çул ытла иртнĕ хыççăн та, хаш сывласа аса илет Пелагея Алексеевна (хури те, шурри те пуç çине çамрăклах нумай тиеннĕ мар-и). – Вăрçă пырать. Выçă. Сивĕ, хутма вутти, тăхăнма тумтирĕ çук. Тракторсем çĕмĕрĕлетчĕç, запас пайĕсем çитместчĕç. Бригада членĕсем пĕрле пухăнса ĕçлесе илнĕ пурçук укçана пухса Горький хулинчен запас пайсем тупса килеттĕмĕр. Нимĕç çын çиенĕсене хăвăртрах çĕнтермелле пултăрччĕ тесе мĕнпур пек вăя шеллемесĕр ĕçлеттĕмĕр. Тăван çĕршыв малашлăхĕ, шăпи кашнинех хумхантаратчĕ, хăш-пĕр самантсенче хăрататчĕ те. Йывăрлăхсенче чĕр вăй парса тăраканни те ĕненÿ пулнă. Эпир пурпĕрех çĕнтересрессе ĕненни, шанни тата алă усманни, кĕрешни. Çапла пулмалла та вăл этем тенин. Малашлăхшăн тăрăшакан çĕнтеретех.

Тăхăр çул ĕçленĕ Пелагея Алексеевна хурçă учĕпе – ХТЗ тракторпа. Тăрăшулăхĕшĕн, ĕçченлĕхĕшĕн икĕ медаль, Хисеп хучĕсем, парнесем парса чысланă ăна. Асăнмалăх, савăнмалăх.

Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех тăван Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозра тимлерĕ Пăлаки аппа. Бригадăра тата пĕр тапхăр сурăх ферминче. Ферми пысăкчĕ, икĕ пин çурă уйăх ытла сурăх пуçĕччĕ. Тăваттăмĕш уй-хир бригадин бригадирĕ (вăлах ферма заведующийĕ те) Иван Никитич Волков питĕ кăмăллăччĕ ун ĕçĕпе.

– Халĕ ĕнтĕ колхозĕ те саланнă тахçанах, – хăйĕн чун ыратăвне пытармасть ĕçпе тыл ветеранĕ. – Шел. Темĕн чуль йывăр вăхăтра та пулăхлă уй-хире çум курăкĕ айĕнче вырттарманччĕ эпир... Юрать-ха çĕрĕн йывăр ĕçĕнчен шиклемен пуçарулла çынсем тупăнчĕç.

Мĕнпур савăнăçĕ, телейĕ Турă панă тивлетлĕ ăшă паллă Пелагея Алексеевнăн – ачисем, мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем. Вĕсем çирĕп сывлăхлă, ăслă-тăнлă пулни. Асли, Рена хĕрĕ, вылăх врачĕ, Хусанти Бауман ячĕллĕ ветеринари институтĕнче вĕреннĕ. Алла диплом илнĕренпех Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче ветврач пулса ĕçлет. Çемьеллĕ. "Хĕрĕм валли çавăн пек кĕрÿ çитĕнтернĕшĕн Турра тав. Владимир – ырă кăмăллă, ылтăн аллăллă çын", – тет Пăлаки аппа. Мăнукĕсем Алексейпа Анна иккĕшĕ те И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухрĕç. Химик тата географ.

Кĕçĕнни, Геральдий ывăлĕ, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухрĕ, инженер. Техникăна питĕ кăмăллать, халĕ Шупашкарта ĕçлет. Кинĕпе тивĕçлипе мухтанать çĕр çулхи ветеран. "Пĕр çăвартан пурăнатпăр, урлă-пирлĕ сăмах пулман пирĕн хушăмăрта нихăçан та",– тет савăнса. Валентина Ивановна Шетмĕпуç шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентет. Сăмах май, унăн амăшĕ те, Автанкассинчи Дария Петровна Петрова, Пелагейăпа пĕр вăхăтра тракторпа ĕçленĕ. Тĕл пулсан тăхлачсен, икĕ хĕрарăм-трактористкăн, сăмах пине каятчĕ, калаçса тăранаймастчĕç.



– Тăватă мăнукăм та Шетмĕпуç шкулĕнче вĕреннĕ чухнех питĕ тимлĕччĕ, лайăх паллăсемпе савăнтаратчĕç. Валерий спорт шкулĕнче тренера вĕренчĕ, Владислав технолог дипломне алла илчĕ, Вера амăшĕн çулне суйларĕ, педагогика университетĕнче ăс пухрĕ. Кĕçĕнни Дмитрий Мускаври нефтьпе газ индустрийĕн институтĕнчен вĕренсе тухрĕ. Кашни хăй суйланă ĕçре вăй хурать. "Савăнатăп, чунтан хĕпĕртетĕп. Пирĕн вăхăтра вĕренме май килмерĕ. Вĕренмелле. Вĕреннĕ çын çунатлă." Пăлаки аппа сăмахĕсем – тĕрĕс сăмахсем.

– Уявсенче пурте пухăнаççĕ те куç тулли савăнăç куç умĕнче, кайсан пÿрт пушанать юлать. Ăш вăркать. Юрать-ха телефон пур, калаçсах тăратпăр.

Çапла вăл, пурнăçăн анлă та сарлака каçалăкĕпе пĕр хăвăншăн çеç саркаланса, реххетленсе утман чухне. Чун ăшши, Пăлаки аппа пеккисен, пурин валли те çитет. Пурнăça, ыттисене юратни, шалтан тапса тăракан хĕлхем пурри чĕр вăй парса тăрать çынна.

Çĕр çулхи юбиляр, шур аппа, кĕреке илемĕ – Пелагея Алексеевна Алексеева. Çак хисеплĕ хĕрарăма таврари ялсенче пĕлмен-палламан çын çук та. Вăл Шетмĕпуç тăрăхĕнчи пĕрремĕш хĕрарăм-трактористка пулнă-çке.

**И. РАЕВСКАЯ.**

Чăн пулни

# Антисептик кĕленчи "лăх-лăх кулать"

"Ăçта-ши вăл куккукĕ,
Хитре юрă юрлаканĕ.
Ак çакăнта, çак кĕрекере,
Хитре юрă юрлаканĕ", – çаплараx шăрантараççĕ хĕрсе çитнĕ Кĕркурипе Васук. Хăйсем питĕ савăнăçлăн калаçаççĕ, пĕр-пĕрне пĕр хут та мар ыталаççĕ...

Сĕтел çинчи антисептик кĕленчин çунат пулнă пулсан, мĕн курнипе савăнса вĕçсе кăна каймалла. Пĕр кĕленчи пушă, вăл чăн паттăр тейĕн, унăн хăвачĕ пысăк вĕт. Тепри тулли-ха, ларсан-ларсан вăл та пушанĕ. «Ăна аптекăра сутаççĕ вĕт, тем чухлĕ ĕçсен те нимĕн те пулас çук», – калаçать икĕ тус. «Ку кĕленчесем пушансан, Тарусăн татах нумай», – пĕлтерет Кĕркури. Ĕнер кăна Мускавран ĕçлесе таврăннă, ĕçмелĕх укçа пур. Хăйсем çавăн пек "ырă" пурăннишĕн хĕпĕртеççĕ тата.

Сĕтел çине симĕс суханпа хытă çăкăр татăкĕ саккускăлăх хатĕрлесе хунă. Çулĕпе ватăмарсхерсен шăлĕсем çирĕп те хыт çăкăр палли те çук. Суханне те çăвар тулли чăмлаççĕ хайхискерсем.

Акă икĕ тусăн черетлĕ кĕленче пушанчĕ. Каснă ват юман евĕр çĕре тÿлеттерчĕ Кĕркури. Хăй вара çав-çавах юрланă пекки тăвать-ха. Чунĕ пулнă пулсан, курни-илтнишĕн спирт кĕленчи сасăпа кулса ярĕччĕ ĕнтĕ. Кĕркурие наччасрах савăрса çапрĕ вĕт, чăнахах та пултарать, ним мар пĕрре - нуль шутпа çĕнтерчĕ хаяр шĕвек.

Васук вара аптăрамасть-ха, унăн пуçĕ те ĕçлеме пăрахман, ура çинчех утать. Вăл часах Кĕркури кĕсйине кĕрсе кайрĕ те укçа çаклатса кăларчĕ. Хăш-пĕр укçи çĕре те ÿкрĕ, хыпаланнипе вăл ăна асăрхамарĕ те.

Кĕсьере укçа пурришĕн савăннипе Васук Таруç аппа патне сулкалана-сулкалана тухса таплаттарчĕ. Урисем ăçта каймаллине те пĕлеççĕ çав, тĕрĕсех илсе çитерчĕç. Паллах, аппа кун пек хăнана питĕ хавас, вăл укçапа килнĕ-çке.

Васук сĕтел çине укçа кăларса çатлаттарчĕ, унăн шутне те пĕлмест вĕт, уншăн тарне вăл тăкман та-ха. Таруç аппа хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, уншăн пулсан тавар ăсатса укçа ĕçлесе илесси пултăр, ытти вара – ик айкки те тăвайкки. Вăл хăнан хĕвĕнчи кĕсйине икĕ савăт чиксе те хучĕ. Хăй вара усламшăн питĕ савăнчĕ, кунта хĕрлĕ, симĕс тĕслисем те пур вĕт. Укçаран юлашки вăхăтра татăк пурăнмасть Таруç. Унăн чунĕ усламшăн хĕпĕртенипе чĕрийĕ те пысăкланса пырать пулĕ.

Сулланакан Васук урамалла васканçи турĕ, ăна урисем килне тĕрĕсех илсе çитерчĕç. Усал шĕвек савăтне хыпаланса уçрĕ те чыхлана-чыхлана ĕçрĕ. Юлнă шĕвеке тăкса ярасран сыхланса хăйĕнчен аяккарах лартрĕ. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, сĕтел çине пуçне тайрĕ те ларнă çĕртех çывăрса кайрĕ.

Ку вăхăт тĕлне Кĕркури те ура çине тăракан пулчĕ ĕнтĕ. Ăшĕ хыпнипе сĕтел патне пырса Васука вăратма хăтланчĕ. Анчах та тусĕ текех сас параймарĕ, чĕри тапма пăрахнă иккен.

Çапла та пулать вăл пурнăç пурăнма пĕлмесен, этил спирчĕ Васука пĕрре-нуль шутпа çĕнтерчĕ. Çавăнпа та усал шĕвеке парăнас марччĕ, пурнăçа тĕрĕс-тĕкел иртересчĕ.

**Е. ВАСИЛЬЕВ.**
Якаткасси ялĕ.

Паллă ентеш

# Маттур Кашмаш каччи



Пултаруллă композитора, педагога, СССР композиторсен союзĕн членне, Чăваш АССР искусство тава тивĕçлĕ ĕçченне, РСФСР тава тивĕçлĕ искусство ĕçченне Аверий Токарева пирĕнтен чылайăшĕ лайăх пĕлет. Хăйĕнпе тĕл пулма тӳр килмен пулсан та, ун пирки илтнех-тăр. Паллă ентеше сума сусах ĕнтĕ кашмашсем ял урамне те ун ятне панă. Шăпах 100 çул каялла – 1918 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче çуралнă Аверий Матвеевич.

Аверий Токарев вĕрсе каламалли инструментсемпе оркестр валли музыка, увертюрăсемпе оркестр сюитисем, симфонисем çырассипе палăрнă. Ачасен театр спектаклĕсем валли те музыка сахал мар хайланă. Унăн ĕçĕсем халĕ те çĕршыв шайĕнчи музыка аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Оринин халăх театрне йĕркеленĕренпе – 100 çул

# Театр аталанăвне сăнлакан курав

Орининти халăх театрне йĕркеленĕренпе кăçал 100 çул çитнĕ ятпа районта тĕрлĕ мероприяти иртет. Вĕсен шутĕнче иртнĕ эрнекун, ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче, Тури чăвашсен музейĕнче асăннă театрăн кун-çулĕпе туллин паллаштаракан курав уçăлни те паллă вырăн йышăнать.

Курава уçса пухăннисене Орининти Культура çурчĕн директорĕ В. Васильева саламларĕ. Унтан вăл 100 çулхи аталану çулне сăнласа пачĕ. Театр аталанăвне пысăк тӳпе хывнă В. Васильев курава пысăк экспонатсем тăратнă. Театр пурнăçĕпе паллаштарнă май, Вячеслав Прохорович вĕсенчен нумайăшĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Район администрацийĕн культура, архив ĕçĕсен тата туризм пайĕн ертӳçи Е. Чернова театр пурнăçĕ хăйне евĕр пулни, пурнăçа юратакансем çеç артист рольне калăплама пултарни çинчен каларĕ.

Театрăн юлашки çулсенчи аталанăвĕ ытларах çамрăксемпе çыхăнни çинчен Оринин ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçипе В. Вязовпа халăх театрĕн юлашки 5 çулти режиссерĕ А. Андреев ĕнентерӳллĕ тĕслĕхсемпе каласа пачĕç.

**А. БЕЛОВ.**






**Сăн ӳкерчĕкре: куравра (сулахайран сылтăмалла): театр ветеранĕсем В. Васильевпа Г. Иванова, аслисен ĕçне малалла тăсакан Н. Чебакова, Орининти Культура çурчĕн ертӳçи В. Васильева тата халăх театрĕн режиссерĕ А. Андреев.**

Спорт

# Москакасси – биатлон центрĕ валли меллĕ

**Нумаях пулмасть пневматика биатлонĕн республика ăмăртăвне Муркаш районĕнчех сăнама май пулчĕ. Республикăри Олимп резервĕн иккĕмĕш спорт шкулĕн директорĕ Н. Николаев пĕлтернĕ тăрăх, кун пек ăмăртусене Москакассинче малашне те иртерме шутлаççĕ. Ирттерме кăна та мар, пневматика биатлонĕн центрне те туса хурасшăн. Шăпах çакăн пирки калаçрăм та Николай НИКОЛАЕВПА.**

**– Николай Арсентьевич, республика шайĕнчи центра Москакассинче туса хума майсем çителĕклĕ-и?**

– Москакассинче республикăри пневматика биатлонĕн центрне туса хума майсем çителĕклĕ. Чи малтанах, кунти йĕлтĕр йĕрĕ спортсменсемшĕн питĕ меллĕ. Вăл ăнăçлă вырнаçнă: тӳрем вырăн та, çырмаллă вырăнсем те пур. Кун пек трасса йĕлтĕрçĕсемшĕн паха шутланать. Каçалапа трассăна çутатса тăрассине йĕркеленĕ. Куракансем валли трибуна йĕркелеме те май пур. Йĕлтĕр йĕрĕ шкул çывăхĕнчех. Шкулти путвалта спортсменсене валли хывăнса тăхăнмалли пӳлĕм йĕркеленĕ, ăна хутса ăшăтмалла тунă.

Çакă пĕтĕмпех Муркаш районĕнче спорта аталантарас тесе тăрăшакансем пуррине çирĕплетет. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хăй те ку тĕлĕшпе пуçарулăхпа палăрса тăрать, ĕçе йĕркелеме пĕлет. Çавăнпа та Муркаш районĕпе тачă çыхăнса ĕçлеме пирĕн кăмăл та пысăк.

**– Пневматика биатлонĕн центрне çулталăкĕпех ĕçлеттерес тесен вара тата мĕнле ĕçсем пурнăçлама тивĕ?**

– Хĕлле трассăна тытса тăма хальлĕхе эпир кунта ятарлă техника панă. Çулла валли вара роллер-йĕлтĕрпе тренировка ирттерме те, ăмăртусем ирттерме те вырăн йĕркелемелле. Ку ыйтăва район администрацийĕпе тата Спорт министерствипе пĕрле канашласа татса пама май тупатпăрах тесе шутлатăп.

Каламалла, кунта малтан та лайăх трасса пулнă. Муркашсен биатлон традицийĕ çирĕп: Сергей Завьялов, Таня Моисеева, Вячеслав Акимов биатлонистсем – тĕнчипех палăрнисем. Çавăнпа та эпир çĕнĕ "Моисеевăсемпе Акимовсене" тупасшăн.

Москакассинче пирĕн тренер Александр Романов ĕçлет. Ун патне халĕ ытларах вăтам ӳсĕмри ачасем тренировкăна çӳреççĕ. Вĕсем кашни кун тенĕ пекех йĕлтĕрпе ярăнаççĕ, винтовкăран переççĕ.

Пневматика винтовкисене эпир Москакасси шкулне кăçал туянса панă. Пурĕ 9 винтовка. Ăмăрту ирттерме оборудовани хальлĕхе илсе килнĕ, анчах та малашне кунта оборудовани яланлăха вырнаçтарма та вырăн пур.

**– Эсир ертсе пыракан Олимп резервĕн иккĕмĕш шкулĕ республикăра биатлона аталантарассипе мĕнле ĕçсем пурнăçлать?**

– Пирĕн спорт шкулне тĕрлĕ районти спортпа туслă ачасем вĕренме килеççĕ. Эпир вĕсене малалла аталантарма условисем туса парассипе тăрăшатпăр. Пирĕн патра ăсталăх пухнă хыççăн вара пысăк спорта та алăксем уçă.

Пирĕн спорт шкулĕнче, биатлонпа пĕрлех, йĕлтĕрпе чупасси, фристайл тата конькипе чупасси те аталанса пыраççĕ. Спортăн асăннă енĕсемпе çĕршывăн пĕрлештернĕ командисенче те пирĕн спортсменсем пур.

Эпир республикăри биатлон федерацийĕпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Унăн ертӳçи Николай Лисин та республикăра биатлона аталантарма çамрăксем валли пневматика биатлон центрĕ кирлине палăртать. Вăл та Москакассинчи лару-тăрупа кăмăллă.

Вырăнти шкул директорĕ И. Иванов та, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та, çавăн пекех В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн Муркашри филиал директорĕ А. Сидюшкин та ку центра туса хурас кăмăл пысăккине пĕлтерчĕç. Тĕллеве пурнăçламалли мелсене те сӳтсе яврăмăр. Апла пулсан спортпа туслă чылай ачан ĕмĕтне пурнăçлама пултаратпăрах тесе шутлатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Спорт

# Ветерансем спортра та тĕслĕхре

Пирĕн район – спортпа туслă район. Районта çуллен спортăн тĕрлĕ енĕпе ăмăртусем предприяти-организацисенчисенчен, шкулсенчисенчен тытăнса район, республика шайĕнчисем таранах иртеççĕ кăна мар, çавăн пекех спорт ăмăртăвĕсем тĕрлĕ ӳсĕмрисем хушшинче те анлă сарăлнă. Районти "Сывлăх" ФСК-ра апрелĕн 11-мĕшĕнче иртнĕ спорт фестивалĕ те çакна лайăх çирĕплетет.

Çав кун физкультурăпа спорт комплексне районта тĕрлĕ çулта тата тĕрлĕ отрасльте ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансем пухăнчĕç. Агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен район канашĕн пуçарăвĕпе районти ветерансен спорт фестивальне кăçал пуçласа ирттерчĕç.

Ветерансене спорт уявĕпе (асăннă мероприятие урăхла калама та май çук пулĕ) АПК ветеранĕсен республикăри союзĕн председателĕ Иван Козин, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – пай пуçлăхĕ Лилия Тарасова, АПК ветеранĕсен район канашĕн председателĕ Валерий Вязов, ФСК директорĕ Александр Куликов, социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина Аникина, райадминистрацин вĕренӳ пайĕн физкультурăпа спорт секторĕн заведующийĕ Михаил Николаев саламларĕç, малашне те район пурнăçĕнче, вăл шутра спортра та, активлăхпа палăрма сĕнчĕç.

Спортпа туслă ветерансем çав кун бассейнра 25 метра ишессипе, алă вăйĕпе тĕртĕнессипе, çурăм çине выртса кĕлеткене çĕклессипе, тăнă çĕртен алăсемпе урайне пĕкĕрĕлессипе хăйсене тĕрĕслерĕç. Мала тухнисем дипломсене тивĕçрĕç. Ăмăртăва хутшăннисен спортăн çак енĕсемпе тунă кăтартăвĕсене вара ГТО нормативĕсене пурнăçланин шутне кĕртрĕç. Çапла вара ветерансенчен чылайăшĕ çав кун ылтăн, кĕмĕл тата пăхăр ГТО значокĕсене илмелли нормативсене пурнăçлама пултарчĕ.

Çавăн пекех ветерансем спорт фестивалĕнче шашкăлла тата шахматла, сĕтел çи теннисла выляса савăнчĕç, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма çĕнĕ вăй-хал пухрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ăмăртусем хыççăн.**



## Объявления




**Хисеплĕ куракансем, юратнă тус-тăвансем! Апрелĕн 27-мĕшĕнче Яков Ухсай ячĕллĕ Культура керменне эпĕ, Михаил ИВАНОВ, сире кăмăлтан хамăн черетлĕ «Юратупа телей сунса» концерта йыхравлатăп. Тел.: 8-927-669-88-69.**

* * *

**Продается дом в высел. Первое Мая. Земля 40 соток, плодоносящий сад. Асфальт, газ, вода рядом. Цена договорная. Тел.: 8-905-342-61-45. 2-2.**

* * *

**ООО «Сундырь-Хлеб» требуется кладовщик склада готовой продукции.**

* * *

**Выльăхсем хаклă хакпа пуçтаратпăр: ĕне, вăкăр тата чирленĕ выльăхсем илетпĕр. Тел.: 8-919-974-46-14. 6-10.**

* * *

**Продаю 1-комн. квартиру в с. Моргауши по ул. Ленина площадью 36,3 $м^2$, на 1 этаже кирпичного дома за 1050000 руб. Тел.: 8-927-855-93-85.**

* * *

**Принимаю ученика на ремонт обуви в с. Моргауши (можно инвалида). Тел.: 8-905-027-82-11. 1-2.**

* * *

**Срочно продаю дойных коз (3 и 1 год), молоко вкусное, козла (1 год), козлят (1,5 мес.). Цена договорная. Тел.: 8-906-136-39-70.**

* * *

**Ялта пурăнмалли çурт ытти хуралтăсемпе пĕрле сутатпăр. Тел.: 8-961-343-28-01.**

* * *

**Продаю ячмень с пшеницей, 6 руб за 1 кг. Доставка. Тел.: 8-919-650-39-91.**

* * *

**Сумалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. 8-967-471-47-81.**

* * *

**Ăратлă, сĕтлĕ, 7 пăрулană хăмăр тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-903-322-79-90.**

* * *

**9 уйăхри ăратлă хура тĕслĕ тына пăрушне усрама сутатпăр. Тел.: 8-919-975-20-19**

* * *

**Монтаж систем отопления, водоснабжения и канализаций; установка сэндвич дымоходов и вентиляций; сверление отверстий алмазной коронкой (материал – бетон, кирпич, дерево). Продажа и обслуживание: Baxi, Siberia и т.д. Тел.: 8-937-010-02-30. 2-10.**

* * *

**Продаю картофель мелкий, семенной; солому в рулонах; ячмень, пшеницу. Есть доставка. Тел.: 8-961-338-21-08. 1-5.**

* * *

**Октябрь вĕçĕнче пăруламалли шурă-хура ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-993-43-45.**

* * *

**Продаю сено в тюках с доставкой. Тел.: 8-905-342-99-02.**

* * *

**Продаю крепкий дом с надворными постройками в д. Сюрлатри, зем. уч. 40 сот., плодоносящие деревья, пруд возле дома. Тел.: 8-905-341-59-53, 8-919-662-56-73.**

* * *

**Декабрь пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-382-17-89.**

* * *

### Сообщение о приеме предложений по кандидатурам в составы участковых избирательных комиссий

Моргаушская территориальная избирательная комиссия объявляет прием предложений по кандидатурам в составы участковых избирательных комиссий на территории Моргаушского района Чувашской Республики. В соответствии с требованиями Федерального закона "Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации" участковые избирательные комиссии формируются на основе предложений политических партий, иных общественных объединений, представительных органов муниципальных образований, собраний избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы.

Прием документов осуществляется территориальной избирательной комиссией в период с 16 апреля по 18 мая 2018 года по рабочим дням с 08.00 до 12.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 308. Сведения о перечне и количестве членов участковых избирательных комиссий избирательных участков размещены на сайте администрации Моргаушского района в разделе "Объявления"

Заседание по формированию новых составов участковых избирательных комиссий состоится не позднее 8 июня 2018 года.

## Спорт

# Раççей кубокĕнчи çитĕнӳ

Иртнĕ эрнере Çĕнĕ Шупашкар хулинче тĕревпе хускану тĕлĕшĕнче хевтесĕр çынсен бадминтон енĕпе Раççей кубокĕн пĕрремĕш тапхăрĕ иртнĕ. Çак хулари Олимп резервĕн виççĕмĕш спорт шкулне Раççей Федерацийĕн 18 регионĕнчи 60 ытла спортсмен пухăннă.

Чăваш Ен спортсменĕсем пысăк ăмăртура 19 медаль çĕнсе илме пултарнă: 9 ылтăн медаль, 4 – кĕмĕл, 6 – бронза.

Малти вырăнсене тухнисен йышĕнче пирĕн ентешсем пурри уйрăмах савăнтарать.

Исетерккĕре çуралса ӳснĕ Юрий Степанов Павел Попов спортсменпа мăшăррăн вылянă бадминтон матчĕсенче 1-мĕш вырăн йышăннă.

Ярапайкассинчи Илья Паргеев хирехирĕç пĕчченшерĕн вылякансен ушкăнĕнче 2-мĕш вырăна тухма пултарнă. Отарккăри Алексей Ефимовпа **(сăн ӳкерчĕкре)** мăшăррăн выляса вĕсем 3-мĕш вырăн йышăннă.




# Суперфиналта ăнăçлă вылянă



Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан пикесем Муркаш шкулĕнче 8–11 классенче вĕренеççĕ. Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пынипе пĕрлех вĕсем волейболла та ăста выляççĕ.

Нумаях пулмасть хĕрсен команди республикăри шкулсен волейбол лигин суперфинал ăмăртăвĕсене хутшăнчĕ. Унччен вара муниципалитет шайĕнче, районсем хушшинчи ăмăртусенче ăнăçлă вылянă. Суперфинал вăййисенче хĕрсен команди 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă.

Команда хăйĕн ăсталăхне çултан-çул ӳстерсе пырать. Апла пулсан "Сывлăх" спорт шкулĕн тренерĕ Олег Лоцмановирттерекен тренировкăсем ӳсĕм çулĕ çине тухма пулăшаççĕ. Паллах, Муркаш шкулĕнчи физкультура вĕрентекенĕсен тӳпи те пур, мĕншĕн тесен хĕрсем спортпа чи малтанах вĕсем хавхалантарнипе туслашнă.

# Çамрăк пулсан та ăста

Муркаш боксерĕсем Кстово хулинче нумаях пулмасть иртнĕ пысăк ăмăртуран черетлĕ çитĕнӳпе таврăнчĕç. Халăхсем хушшинчи çирĕммĕш бокс турнирне Раççейри тата ытти çĕршыври пурĕ 380 спортсмен хутшăннă, апла пулин те муркашсем çак пысăк йышра палăрма пултарнă.

Максим Долгов 3 кĕрешӳ ирттерсе пуринче те выляса илнĕ, хăйĕн виçе категорийĕнче 1-мĕш вырăна тухнă. Даниель Соколов тăватă кĕрешӳрен виççĕшĕнче çĕнтерсе 2-мĕш вырăн йышăннă. Вячеслав Соколов виçĕ кĕрешӳрен иккĕшĕнче çĕнтернĕ, 2-мĕш вырăна тухнă. Игорь Садовников виçĕ кĕрешӳрен иккĕшĕнче çĕнтерсе 3-мĕш вырăна тивĕçнĕ. Команда йышĕнче Александр Максимов боксер та кĕрешӳсене хутшăннă, анчах пухнă очкосем призерсен йышне кĕме çитеймен.



**Сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла: В. Соколов, М. Долгов, Д. Соколов С. Черкашин тренерпа.**

## Программа Национального телевидения Чувашии с 16 по 19 апреля 2018 г.

**Понедельник, 16 апреля**
06.00 «Рэм Красильников» (16+)
07.00, 14.00 «Круглый стол» (12+)
08.00 «Дон Жуан — юрату шанчăкне çухатнăскер». Драма (12+)
10.00 «Нумай та пĕтет, сахал та çитет». Августа Уляндина пултарулăх касĕ (12+)
12.30, 15.40 «И в шутку, и всерьез» (6+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.05, 20.20, 3.10 «Мой новый друг» (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа (12+)
13.40, 20.30, 3.30 «Экономика в деталях» (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.05, 2.30 «Я люблю Чувашию» (0+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
18.00, 2.00 «Республика в деталях» (12+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
19.00, 0.00 «IT не обойти» (12+)
19.30 «Республика». Информационная программа (12+)
20.00, 3.00 «Акилбупсер» (6+)
21.00, 4.00 «Для тебя!» Концерт ансамбля «Сеспель» (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)
00.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
01.00 «Каçхи тĕлпулу» (12+)
01.30 «Здоровая Чувашия» (12+)

**Вторник, 17 апреля**
06.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
06.30 «Республика». Информационная программа (12+)
07.00, 14.00 «Акилбупсер» (6+)
07.20, 13.40 «Мой новый друг» (12+)
07.30, 15.40 «Экономика в деталях» (12+)
08.00, 14.30, 1.30 «Здоровая Чувашия» (12+)
08.30, 1.00 «Каçхи тĕлпулу» (12+)
09.00, 13.05, 18.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30, 19.00, 0.00 «IT не обойти» (12+)
10.00, 16.00 «Для тебя!» Концерт ансамбля «Сеспель» (12+)
12.30, 0.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.05, 2.30 «Я люблю Чувашию» (0+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
19.30 «Республика». Информационная программа (12+)
20.00, 3.00 «Правовое поле» (12+)
20.30, 3.30 «Отличные студенты» (12+)
21.00, 4.00 «Шанель пике». Камит (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)

**Среда, 18 апреля**
06.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
06.30 «Республика». Информационная программа (12+)
07.00, 13.40 «Правовое поле» (12+)
07.30, 14.00 «Отличные студенты» (12+)
08.00, 14.30 «Здоровая Чувашия» (12+)
08.30, 1.00 «Каçхи тĕлпулу» (12+)
09.00, 13.05, 18.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30, 0.00 «IT не обойти» (12+)
10.00 «Шанель пике». Камит (12+)
12.00, 15.05, 1.30 «Я люблю Чувашию» (0+)
12.30, 19.00, 0.30 «Литература тĕпелĕ»(12+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.40 «И в шутку, и всерьез» (6+)
16.00 «Попугайла хĕрарăм». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
19.30 «Республика». Информационная программа (12+)
20.00, 3.00 «Учим чувашский» (12+)
20.30, 3.30 «Круглый стол» (12+)
21.30, 4.30 «Венок дружбы» (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)

**Четверг, 19 апреля**
06.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
06.30 «Республика». Информационная программа (12+)
07.00, 13.40 «Учим чувашский» (12+)
07.30, 15.05, 2.30 «Я люблю Чувашию» (0+)
08.00, 14.30, 1.30 «Здоровая Чувашия» (12+)
08.30, 17.30, 1.00 «Каçхи тĕлпулу» (12+)
09.00, 13.05 «Республика в деталях» (12+)
09.30, 14.00, 19.00, 0.00, 3.30 «IT не обойти» (12+)
10.00, 16.00 «Венок дружбы» (12+)
11.30 «Круглый стол» (12+)
12.30, 0.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
13.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
15.30 «Республика». Информационная программа (12+)
15.40, 18.00, 2.00 «И в шутку, и всерьез» (6+)
18.30 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
19.30 «Республика». Информационная программа (12+)
20.00, 3.00 «Правительственная связь» (12+)
20.30, 4.00 «Ĕмĕр пĕрле пурăнар!». Валерий Клементьев концерчĕ (12+)
23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
23.30 «Республика». Информационная программа (12+)

## Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ

# Аварире икĕ çын вилнĕ



Çул-йĕр правилисене юнпа çырнă тесе инспекторсем ахаль каламаççĕ. Инкекĕ таçта та, такампа та пулма пултарать.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче «Гигант» – Мăн Сĕнтĕр» автоçул çинче, Каршлăхри арçынсен мăнастирĕ çывăхĕнче, Муркашран Катькас урлă Мăн Сĕнтĕре çӳрекен микроавтобус тата çăмăл машина çапăннипе авари пулнă. Маршруткăра çав вăхăтра 11 çын пулнă. Шалти ĕçсен министерствин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, авари сăлтавĕ (малтан пухнă даннăйсемпе) çăмăл машина хирĕç килекен транспорт çулĕ çине тухса кайнипе çыхăннă.

Аварире çăмăл машина водителĕн (Мари Эл Республикинчен) мăшăрĕ тата пиччĕшĕ вилнĕ. Маршруткăра пулнă икĕ пассажир больницăра медицина пулăшăвĕ ыйтни паллă.

Çул çинче тимлĕ пулăр.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**НЕМЕЦКИЕ ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.**
Низкие цены. Замер.
Доставка – бесплатно.
Гарантия 5 лет.
Пенсионерам скидки.
Без выходных.
Тел.: 8-927-855-83-55. 7-10.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ РЕМОНТ ОКОН**
БЕСПЛАТНО: замер, доставка, демонтаж.
СКИДКИ. РАССРОЧКА.
Тел.: 8-937-391-39-91. 5-10.

**ТЕПЛИЦЫ.** Тел.: 8-937-372-99-93, 8-919-674-72-73. 2-10.

* * *

Закупаю коров, бычков. Тел.: 8-965-688-01-77. 11-11.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 9-10.

* * *

Куплю старые подушки, перину, пух гусиный, утиный. Тел.: 8-999-609-50-32. 1-3.

* * *

Продаю сено, солому в тюках и рулонах. Тел.: 8-927-665-88-82. 4-10.

* * *

Куплю скотину: бычков, коров, телок, молодняк; вынужденный забой. Тел.: 8-961-346-19-79. 9-13.



**ОКНА** 3-8.
- РАССРОЧКА 0%
- СКИДКИ ДО 40%
- ПЕНСИОНЕРАМ ОСОБЫЕ УСЛОВИЯ
- ОФИЦИАЛЬНЫЙ САЛОН ЭНЕРГОСБЕРЕГАЮЩИХ ОКОН REHAU

REHAU Unlimited Polymer Solutions
СБЕРЕГУТ ТЕПЛО, СБЕРЕГУТ ДЕНЬГИ
REHAU QUALITY МАКСИМАЛЬНАЯ ТЕПЛОНОМИЯ

**ДВЕРИ**
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
- МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ВЗЛОМОСТОЙКИЕ
- МЕЖКОМНАТНЫЕ

star

с. МОРГАУШИ, в здании Моргаушского рынка (тел.: 37-66-44, 8-927-667-66-44)



**Весенний ЦЕНОПАД!** РЕАЛЬНО НИЗКИЕ ЦЕНЫ
**Мотоблоки** Хит продаж
ОКА МБ-1ДМ10 двигатель Lifan 6.5 л.с. (Китай) от 25 900* руб.
ОКА МБ-1ДМ17 двигатель Briggs & Stratton 6.5 л.с. (американский) от 36 990* руб. + гусиные лапки в подарок
«НЕВА» г. Санкт-Петербург МБ-2-6,5 л.с. от 34 990* руб.
Даман, Печенег, Кротов, Брайт, Русич, Хаверт (Китай) 7 л.с. от 19 500* руб.
Сажалки Косилки Прицепы от 8990* руб.
С ТЕХНИКОЙ выгодно и надежно!
*Цены указаны в рублях с учетом всех скидок.
**Информацию об организаторе акции, о правилах его проведения, количестве призов и сроках, месте и порядке их получения узнавайте по тел.: 8-800-234-78-08. Розыгрыш проводится в период с 08.01.2018 по 06.05.2018 г.

www.магазин-техника-ядрин.рф 3-6.
**Внимание!**
Весенняя акция для покупателей!
Бесплатная лотерея 6 мая 2018 г.**
ГЛАВНЫЙ ПРИЗ – СКУТЕР
Бесплатная доставка (в радиусе 50 - 80 км) крупногабаритного товара в Ядринский, Воротынский, Красночетайский р-ны
ТЕХНИКА Выгодный кредит!
г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 71д
8-800-234-78-08, 8-905-346-78-08, 8 (8352) 22-7-22
ОАО "ОТП Банк" (ген. лиц. Банка России №2766 от 21.06.2012 г.) и другие банки партнеры.

ЭКОВАТА. Утепление стен, полов, перекрытий, мансард. Быстро. Качественно. Недорого. Тел.: 8-961-345-78-02. 2-2.

Продается магазин «Пилеш» с оборудованием по адресу: с. Чуманкасы, ул. Советская, д. 50. Тел.: 8-926-027-49-79, 8-905-340-99-88. 5-5.

* * *

ТЕПЛИЦЫ ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ: высокое качество, гарантия. Банные печи, беседки, козырьки, навесы, кованые ворота и заборы. Услуги плазменной резки ЧПУ. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14. Тел.: 8-937-390-73-51, 8-919-655-21-51. 5-10.

* * *

«КИРПИЧ полнотелый, пустотелый. БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ заводские. Доставка. Тел.: 8-905-345-02-08. 4-10.

* * *

Организация продает однокомнатную квартиру 37,06 м² в строящемся доме по адресу: с. Моргауши, ул. Парковая, д. 7 «А». Обращаться по тел.: 8-903-345-83-59 с 9 до 17 час. в рабочие дни. 5-5.

* * *

Продаю кур-несушек, кур-молодняк: красных, серых и черных с доставкой. Тел.: 8-909-300-08-18. 7-10.

СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует зерно со склада с 1 апреля: ячмень – 6 руб, пшеница – 7 руб, ЭКД – 23 руб. С доставкой: ячмень – 7 руб, пшеница – 8 руб. Звонить: 62-1-97, 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-73-75. 13-26.

* * *

Требуются инженер по охране труда и бухгалтер со знанием программ 1С (складской учет) и камин в ООО «Дублин» по адресу: Моргаушский район, с. Чемеево, ул. Центральная, д. 4. Тел.: 8-927-861-77-48. 2-4.

* * *

ООО «Миртрубпласт» требуются машинисты экструдера. Тел.: 8(83541)69-343, 69-119. 1-3.

* * *

Продаю трактор МТЗ 1025, 2006 г.в., 105 л.с., с турбиной. Белорусская сборка. Цена договорная. Тел.: 8-987-660-83-82. 1-3.

КРОВЛЯ любой сложности. Отделка домов сайдингом. Металлочерепица, профлист, сайдинг по низким ценам. Тел.: 8-961-345-78-02. 1-10.

Воротынский мясокомбинат закупает: бычков, телок, коров, телят. Цена договорная. Приезжаем сами. Тел.: 8-905-193-31-74. 10-10.

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ.**
Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 62-77.

**ООО «ОБРЯД»**
Изготовление и установка надгробных памятников, также – для умерших (с 12.06.1990 г.) участников ВОВ.
Реализует кресты, гробы, ограды, столы, скамейки, венки и пр.
Пункты приема заказов:
с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, тел.: 8-961-338-01-29;
г. Чебоксары, пер. Ягодный, 4а, тел.: 8(8352)35-10-83. 3-4.

**УТЕПЛЕНИЕ ДОМОВ:** 2-5.
пустотелых стен, полов, чердаков и мансард эковатой и пеноизолом. Тел.: 8-919-669-16-66.

**ОКНА, ДВЕРИ, ЛИНОЛЕУМ, ЛАМИНАТ, СТЕНОВЫЕ ПАНЕЛИ**
Кредит. Рассрочка.
с. Моргауши, маг. «Дуэт», 2 этаж
Тел.: 8-953-010-46-42. 3-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!!
Тел.: 8-909-300-33-66. 13-28.



8-12.
**ТЕПЛИЦЫ**
от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т.д.
Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.

**АДВОКАТ** 3-10.
**8-927-860-08-22.**

**ООО «ТМ» ПРОИЗВОДИТ И ДОСТАВЛЯЕТ БЫСТРО. КАЧЕСТВЕННО. С ГАРАНТИЕЙ**
ПРОФНАСТИЛ ДЛЯ КРЫШ И ЗАБОРОВ оцинкованный и с полимерным покрытием разных цветов
МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА «МОНТЕРРЕЙ»
Производство на новом современном оборудовании.
Изготовление по размерам заказчика:
- доборные элементы на заказ;
- трубы профильные;
- крепеж в ассортименте;
- евроштакетник для забора цветной металлический.

ЗАЯВКИ ПО ЗВОНКУ.
ОПЛАТА ПРИ ДОСТАВКЕ.
ДОСТАВКА – 1000 руб.
Тел.: 8-952-465-97-23, 8-929-042-79-04.
Тел/факс: 8(83174)2-86-05.
Эл. почта: ooo-tm1@mail.ru
Наш сайт: www.profil-tm.ru 2-4.



**В магазине «Василек» на территории Моргаушского рынка – Весенняя Акция!**
ВЕЛОСИПЕДЫ – от 3900 руб.,
ЖК телевизоры – 7900 руб.,
стиральные машины (6 кг) – 13900 руб.,
холодильники – 11900 руб.,
морозильники –12900 руб.,
газовые плиты – 7900 руб., посуда,
сотовые телефоны – от 690 руб. и т.д.
Есть все для цифрового ТВ.
Кредит. Рассрочка.
Доставка бесплатная. 6-10.
Тел.: 8-906-135-98-89.



АГРО
- установка новых двигателей;
- пуско-наладка;
- гарантийное обслуживание;
- ремонт КПП редуктора;
- команда профессионалов.

Широкий выбор мотоблоков (более 20 видов), мотокультиваторов (более 10 видов), навесных оборудований с доставкой до ваших ворот, пуско-наладка, сборка.
Тел.: 8-960-309-18-48, 8-967-47-33-210.

**МОТОБЛОК**
7 л.с.+ фреза+ адаптер для рот. косилки.



25500 руб. (при покупке с тележкой – ПЛУГ в подарок). 7-10.

Большой выбор электроинструментов.

**ЭЛЕКТРОПРОВОДКА!**
Счетчики. Монтаж, ремонт, замена.
Тел.: 8-927-994-69-45. 5-10.

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.

Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 7-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
Тел.: 8-927-667-40-92. 24-48.

**СЛУХовые АППАРАТЫ**
по старым ценам от 5000 до 30000 руб.
СДАЙ СТАРЫЙ АППАРАТ - получи СКИДКУ до 2000 руб.*
РАССРОЧКА до 6 месяцев.** ВЫЗОВ СПЕЦИАЛИСТА тел. 8-912-85-25-719
АППАРАТЫ с КОМПЬЮТЕРНОЙ НАСТРОЙКОЙ.
ВНУТРИУШНЫЕ АППАРАТЫ.
**19 апреля с 14.00 до 15.00**
**Районный Дом культуры,**
ул. Красная Площадь, 5 (Моргауши)
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ
*Подробности уточняйте у продавца или по телефону.**Рассрочку предоставляет ИП Шамгунова С.Р..
Реклама

Совет, правление, профком и коллектив Моргаушского райпо глубоко скорбят по поводу безвременной кончины продавца Тойгильдинского магазина

НИКИТИНОЙ
Майи Владимировны

и выражают искреннее соболезнование ее родным, близким и коллегам. Светлая память о Майе Владимировне навсегда останется в наших сердцах.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ

Мария Порфирьевна
ТОЛИКИНА

ĕç ветеранĕ, пенсионерка вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн, таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.

### Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| День недели | Суббота | | | | Воскресенье | | | | Понедельник | | | | Вторник | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °C | 0 | +2 | +4 | +2 | +3 | +5 | +8 | +7 | +5 | +6 | +9 | +8 | +4 | +8 | +10 | +8 |
| Ощущается как, °C | -4 | -1 | +1 | -2 | -1 | +1 | +4 | +4 | +3 | +5 | +6 | +7 | +3 | +7 | +8 | +7 |
| Давление, мм рт. ст. | 755 | 757 | 757 | 756 | 754 | 752 | 750 | 750 | 750 | 750 | 749 | 749 | 749 | 749 | 749 | 749 |
| тер:скорость,м/с | 3 | 3 | 4 | 4 | 5 | 6 | 7 | 4 | 2 | 2 | 5 | 2 | 1 | 2 | 3 | 2 |
| порывы, м/с | | 6 | 8 | | 8 | 12 | 14 | 7 | | | 10 | | | | 7 | |
| направление | С | С | С-З | З | З | З | С-З | З | С-З | С-З | С-З | З | В | Ю-З | З | Ю |
| Влажность, % | 64 | 66 | 48 | 62 | 55 | 57 | 49 | 61 | 67 | 66 | 52 | 68 | 67 | 58 | 57 | 68 |
| Солнце: восход заход | 04:49 18:56 | | | | 04:47 18:58 | | | | 04:44 19:00 | | | | 04:42 19:02 | | | |
| Луна: восход заход | 04:50 16:38 | | | | 05:09 17:56 | | | | 05:29 19:17 | | | | 05:51 20:38 | | | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.
Р – реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ В.Л. Шапошниуков.
Пичете панă 13.04.2018 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4753.

Номер набран и сверстан в АУ Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.